28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ДЕКАБРЬ
29
ШАМАТКУН
253 (7004) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕ, ЧАССР Верховнăй Совечĕ тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Мускаври канашлăвĕ çинчен пĕлтерни

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем пĕр-пĕрипе тăтăшах хутшăнса калаçасси çинчен Крымри конференци йышăннă, кайран Берлинри конференцире çирĕплетнĕ решени тăрăх, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем Мускавра 1945 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа 26-мĕшне çитиччен канашланă.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен виçĕ Министрĕн канашлăвĕнче, формальнăй йĕркепе мар, тĕпчес йĕркепе, аяларахра кăтартнă çак ыйтусене сӳтсе-явса, вĕсем тĕлĕшпе килĕшӳ тунă.

I.

ИТАЛИПЕ, РУМЫНИПЕ, БОЛГАРИПЕ, ВЕНГРИПЕ ТАТА ФИНЛЯНДИПЕ ТУМАЛЛИ МИРЛĔ ДОГОВОРСЕНЕ ÇЫРСА ХАТĔРЛЕССИ ÇИНЧЕН

1945 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕччĕ: Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем çапла пĕлтереççĕ: мирлĕ договорсене аяларахра кăтартнă йĕркепе çырса хатĕрлемелли çинчен вĕсем пĕр-пĕрипе калаçса татăлнă, тата Францирпе Китай правительствисене çав килĕшӳ çумне хутшăнма чĕннĕ:

1. Италипе, Румынипе, Болгарипе, Венгрипе тата Финляндипе тумалли мирлĕ договорсене Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕ çырса хатĕрлес ĕçе Советăн çак членĕсем çеç хутшăнаççĕ: парăнмалли условисене алă пуснисем, е, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Советне туса хурасси çинчен Берлинри конференци йышăннă килĕшĕвĕн условийĕсем тăрăх, çав парăнмалли условисене алă пуснă тесе шутланса тăраканнисем; çак йĕрке ытти членсене хăйсене тӳрех пырса тивекен ыйтусене сӳтсе-явмашкăн Совет ĕçне хутшăнма чĕнес енĕпе те законлă пулса тăрать; урăхла каласан:

А) Италипе тумалли мирлĕ договорăн условийĕсене Пĕрлешӳллĕ Королевствăн, Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Совет Союзĕн тата Францин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем çырса хатĕрлеççĕ;

В) Румынипе, Болгарипе тата Венгрипе тумалли мирлĕ договорсен условийĕсене Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем çырса хатĕрлеççĕ;

С) Финляндипе тумалли мирлĕ договорăн условийĕсене Совет Союзĕпе Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем çырса хатĕрлеççĕ.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен заместителĕсем Лондонра халех тепĕр хут ĕçлеме пуçлаççĕ, вĕсем Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕн Лондонри пĕрремĕш сессийĕнче сӳтсе-явса калаçса татăлнă тăрăх ĕçлеççĕ.

2. Çав проектсене пурне те хатĕрлесе çитернĕ хыççăн Италипе, Румынипе, Болгарипе, Венгрипе тата Финляндипе тумалли мирлĕ договорсене сӳтсе-явма Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕ конференци пухать. Çав конференцире Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕн 5 членĕ пулаççĕ, çавăн пекех тата Пĕрлешнĕ нацисен членĕсем, Европăри тăшманла государствăсене хирĕç пынă вăрçа хăйсен чылай пысăк вăйĕсемпе активлăн хутшăннисем, пурте пулаççĕ: çапла вара унта çаксем пулаççĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн, Китайăн, Францин, Австралин, Бельгин, Белоруссин Советлă Социализмлă Республикин, Бразилин, Голландин, Грецин, Индин, Канадăн, Çĕнĕ Зеландин, Норвегин, Польшăн, Украина Советлă Социализмлă Республикин, Чехословакин, Эфиопин, Югославин, Кăнтăр Африка Союзĕн представителĕсем пулаççĕ.

Конференци 1946 çулхи майăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр пухăнать.

3. Конференци ĕçĕ пĕтнĕ хыççăн тата вăл сĕннисене пăхса тухнă хыççăн, Италипе, Румынипе, Болгарипе, Венгрипе, Финляндипе тунă перемири условийĕсене алă пуснă государствăсем тата Италипе тумалли мирлĕ договор тĕлĕшпе çав перемири условийĕсене алă пуснă Союзлă государствăсемпе танлаштарнă Франци хăйсем тума тивĕçлĕ мирлĕ договорсен тексчĕсене татăклăнах çырса хураççĕ.

4. Çав майпа хатĕрленĕ мирлĕ договорсен татăклăнах çырса хунă тексчĕсене вара Конференцие пухăннă государствăсен, договор тăвакан тăшманла государствăпа вăрçнăскерсен, представителĕсем алă пусаççĕ.

Унтан тивĕçлĕ мирлĕ договорсен тексчĕсене Пĕрлешнĕ ытти нацисене, договор тăвакан тăшманла государствăпа вăрçнăскерсене, параççĕ.

5. Мирлĕ договорсем вĕсене Перемири условийĕсене алă пуснă Союзлă государствăсем çирĕплетнĕ хыççăнах, Итали тĕлĕшпе вара—Союзлă государствăсемпе танлаштарнă Франци те çирĕплетнĕ хыççăнах законлă пулса тăраççĕ.

Мирлĕ договорсене договор тăвакан тăшманла государствăсен те çирĕплетмелле.

II.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ КОМИССИ ТАТА ЯПОНИ ВАЛЛИ ТУНĂ СОЮЗНИКСЕН СОВЕЧĔ ÇИНЧЕН

А. ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ КОМИССИ

Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комиссие тăвасси çинчен калаçса татăлса килĕшнĕ, çав килĕшӳ çумне Китай пĕрлешнĕ. Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комисси Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Консультаци Комиссине улăштарать. Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комиссин ĕçĕсем çапла пулаççĕ:

I. Комисси туни

Çакăнпа Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комиссие тăватпăр, вăл Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Китайăн, Францин, Голландин, Канадăн, Австралин, Çĕнĕ Зеландин, Индин тата Филиппинсен представителĕсенчен тăрать.

II. Комисси ĕçĕсем

А. Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комиссин çак ĕçсене туса пымалла пулать:

1. Парăнасси çинчен калакан условисем тăрăх Япони хăй илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртмелле тăвакан политикăллă линие, принципсемпе тĕп никĕссене палăртса хумалла.

2. Союзлă Державăсен Главнокомандующине панă кирек мĕнле директивăна та е Главнокомандующи йышăннă кирек мĕнле решение те, Комисси закон йĕркипе тытса пыма тивĕçлĕ политикăллă линие пырса тивекенскере, Комиссин кирек хăш членĕ ыйтсан та, тепĕр хут пăхса тухмалла.

3. Аяларахри V—2-мĕш статьяра кăтартса панă сасăламалли йĕрке тăрăх, çав ĕçе хутшăнакан правительствăсем пĕр-пĕрипе килĕшнĕ тăрăх, Комиссие сĕнме пултаракан ытти çавăн пек ыйтусене те пăхса тухмалла.

Б. Вăрçă ĕçĕсене туса пырас тĕлĕшпе те, çавăн пекех территори ыйтăвĕсене татса парас тĕлĕшпе те Комисси сĕнӳсем памасть.

С. Комисси хăйĕн ĕçĕсенче Япони валли Союзниксен Советне тунине шута илет тата Японире халь ĕçлекен контроль механизмне шута илсе тăрать (кунта Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствинчен пуçласа Главнокомандующи патне çитиччен пур сыпăксем те кĕреççĕ), Комисси çавăн пекех тата Главнокомандующи оккупациллĕ çарсене командир пулса ертсе пырассине те шута илсе тăрать.

III. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствин ĕçĕсем

1) Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви, Комисси тытса пыракан политикăллă линипе килĕштерсе, директивăсем хатĕрлесе хурать, çав директивăсене вара Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствин тивĕçлĕ органĕсем урлă Главнокомандующие парса тăрать. Главнокомандующин ĕçĕ—Комиссин политикăллă решенийĕсене палăртса тăракан директивăсене пурнăçа кĕртесси пулса тăрать.

2) II—А—2-мĕш статья тăрăх пăхса тухнă мĕнле те пулин директивăна е решение Комисси улăштармалла тесе шутлать пулсан, Комисси йышăннă решени политикăллă решени тесе шутланать.

3) Комисси хăйĕн политики тăрăх палăртса хунă ыйтусен ушкăнне кĕмен васкавлă ыйтусем тухса тăрсан, Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви, Комисси решени йышăнассине кĕтсе, Главнокомандующине вăхăтлăх директивăсем пама пултарать; кунта çакна шута илмелле: Японин конституци йĕркине тĕпренех улăштарассине е контроль режимĕнче улшăнусем тăвассине, е Японин мĕнпур правительствине пĕтĕмĕшпех улăштарассине пырса тивекен кирек мĕнле директивăпа та Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комиссире калаçса татăлса килĕшӳ тунă хыççăн кăна памалла пулать.

4) Кăларнă директивăсем пурте Комисси ĕçĕсенче усранаççĕ.

IV. Канашламалли ытти майсем

Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комиссие туни çак ĕçе хутшăнакан Правительствăсене Инçетри Хĕвелтухăç ыйтăвĕсем тăрăх канашламалли ытти майсемпе усă курма чăрмантармасть.

V. Комиссие çаксем кĕреççĕ

1) Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комисси çак килĕшĕве тунă çĕре хутшăнакан кашни государствăран пĕрер представительтен тăрать. Кирлĕ пулсан, çак ĕçе хутшăнакан державăсем пĕр-пĕринпе килĕшнĕ тăрăх Комисси членĕсен хисепĕ Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Пĕрлешнĕ ытти нацисен е унта территори тытса тăракан нацисен представителĕсене хушнипе ӳсме пултарать. Комисси пăхакан ыйтусем пирки тата уйрăмах Комисси членĕсем пулса тăман çĕршывсене пырса тивекен ыйтусем пирки Комисси, кирлĕ пулсан, Комисси членĕсем пулса тăман Пĕрлешнĕ нацисен представителĕсемпе тивĕçлĕ йĕркепе туллин канашласа иртерет.

2) Комисси решени йышăнас пулсан, çав решение йышăнма пурте пĕр сасăллă пулни кирлĕ мар, анчах çав решение, сахалтан та, мĕнпур представительсен ытларахăшĕ килĕшни кирлĕ, çав представительсен шутне çакă тăватă держава представителĕсем кĕмелле: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн тата Китайăн представителĕсем.

VI. Комисси вырнасса тăрасси тата унăн ĕçне организацилесси

1. Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комисси Вашингтон хулинче вырнасса тăрать. Лару-тăру мĕнлине курă е кирлĕ пулса тăнă чухне Комисси ытти вырăнсенче те пухăнма пултарать, ку шута Токио хули те кĕрет.

Союзлă Державăсен представителĕ пулса тăракан Главнокомандующипе канашлама кирлĕ тесе шутланакан мероприятисене Комисси хăйĕн представителĕ урлă канашласа туса пыма пултарать.

2. Комиссире кашни представительпе пĕрле тивĕçлĕ персонал пулма пултарать, ку шута гражданла çынсем те, çавăн пекех çар представителĕсем те кĕреççĕ.

3. Комисси хăйĕн секретариатне тăвать, кирлĕ тесе шутласан, тĕрлĕ комитетсем тăвать, хăйĕн организацийĕпе ĕç йĕркине ытти тĕрлĕ майсемпе те лайăхлатса пырать.

VII. Комисси ĕçĕ пĕтесси

Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комисси, сахалтан та, мĕнпур представительсен ытларахăшĕ решени йышăнсан, хăйĕн ĕçне пĕтерме тивĕçлĕ, çав представительсен шутне çакă тăватă держава представителĕсем кĕреççĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн тата Китайăн представителĕсем.

Комисси хăй туса пĕтерейĕмен ĕçсене хăрушсăрлăхăн кирек мĕнле вăхăтлăх е яланлăх организацине те, çак ĕçе хутшăнакан правительствăсем членра тăраканскерне, тивĕçлĕ майпа пама пултарать.

Çакăн пирки килĕшӳ тунă: Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви 1-мĕш пунктра кăтартнă ытти правительствăсене Комисси ĕçĕсем çинчен тăватă держава ячĕпе пĕлтерсе тăрать тата вĕсене сĕнĕрен пăхса тухнă никĕс çинче çак ĕçе хутшăнма чĕнет.

В. ЯПОНИ ВАЛЛИ ТУНĂ СОЮЗНИКСЕН СОВЕЧĔ

Япони валли Союзниксен Советне тăвасси çинчен калаçса килĕшнĕ, çав килĕшӳ çумне Китай пĕрлешнĕ:

1. Союзниксен Советне тăватпăр, вăл Токио хулинче вырнаçса тăрать, унăн председателĕ Союзлă Державăсен Главнокомандующийĕ (е унăн Заместителĕ) пулса тăрать. Союзниксен Советне Главнокомандующипе калаçса илес тĕллевпе тата ăна капитуляципе оккупаци условийĕсене пурнăçа кĕртес ĕçе, Японие контроллесе тăрас ĕçе, çавăн пекех капитуляци условийĕсем çумне хушса кăларнă директивăсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине контроллесе тăрас ĕçе пырса тивекен ыйтусем тăрăх канашсем парас тĕллевпе тата сакăнта кăтартса панă контроль влаçне тытса пырас тĕллевпе тунă.

2. Союзниксен Совечĕ Главнокомандующирен (е унăн Заместителĕнчен), Советăн председателĕ тата унăн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем уйăрнă членĕ пулса тăраканскерĕнчен, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ уйăрнă членран, Китай уйăрнă членран тата Пĕрлешӳллĕ Королевство, Австрали, Çĕнĕ Зеланди, Инди пурте пĕрле уйăрнă членран тăрать.

3. Советăн кашни членĕн тивĕçлĕ штат тытса тăма право пур, çав штата çар советникĕсемпе гражданла советникĕсем кĕреççĕ.

4. Союзниксен Совечĕ икĕ эрнере пĕрререн сахал мар пухăнать.

5. Главнокомандующи капитуляципе оккупаци условийĕсене тата Японие контроль туса тăрас ĕçе пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пур тĕрлĕ приказсене те, çавăн пекех тата çав условисем çумне хушса çырнă директивăсене те парса тăрать. Пур чухне те решенисене Главнокомандующи урлă тата вăл кăтартса панă тăрăх пурнăçа кĕртсе пыраççĕ; Главнокомандующи Союзлă Державăсен Японири пĕртен-пĕр ĕç тăвакан влаçĕ пулса тăрать. Паллă вырăн йышăнса тăракан ыйтусем тăрăх приказ париччен Главнокомандующи, лару-тăру май парсан, Советпа канашласа илет. Çав ыйтусем тăрăх вăл йышăннă решенисем татăклă решенисем пулса тăраççĕ.

6. Совет членĕ контроль режимне улăштарас, конституци йĕркине пысăк улшăнусем кĕртес тата Япони правительствине пĕтĕмĕшпех улăштарас ĕçе пырса тивекен ыйтусем тăрăх Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комиссин политикăллă линине пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе Главнокомандующипе (е унăн Заместителĕпе) килĕшмесен, Главнокомандующи çав ыйтусем тăрăх приказсем пама Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Комиссире çав ыйтусем пирки килĕшӳ тăвиччен чарăнса тăрать.

7. Ытти Союзлă Державăсен представителĕсемпе Союзниксен Советĕнче тивĕçлипе малтанлăха калаçса пăхнă хыççăн, Главнокомандующи, кирлĕ пулсан, Япони правительствин уйрăм министрĕсене улăштарас тĕлĕшпе е кабинетăн уйрăм членĕсем отставкăна тухнă хыççăн пушанса юлнă вырăнсене урăх çынсем лартас тĕлĕшпе решени йышăнма пултарать.

III. КОРЕЯ

1. Корейăна никама пăхăнман государство туса хумашкăн, ăна демократиллĕ йĕркепе аталанса пымалли условисем туса памашкăн тата японецсем унта нумай вăхăт хуçи пулса тăнин сиенлĕ результачĕсене часрах пĕтерсе хумашкăн Корейăра Корейăн Демократиллĕ Вăхăтлăх Правительствине туса хумалла. Çав Правительство Корейăри промышленноçа, транспорта, ял хуçалăхне тата Корея халăхĕн наци культурине аталантарас тĕлĕшпе мĕнпур кирлĕ мерăсене пурнăçа кĕртмелле.

2. Корейăн Вăхăтлăх Правительствине туса хума пулăшмашкăн тата ăна тума кирлĕ мероприятисене хатĕрлемешкĕн Пĕрлехи Комисси тумалла. Вăл Комиссие Америкăн Кăнтăр Корейăри çарĕсен командованийĕн тата Совет Союзĕн Çурçĕр Корейăри çарĕсен командованийĕн представителĕсене кĕртмелле. Çав комисси хăйĕн сĕнĕвĕсене хатĕрленĕ чухне Корейăри демократиллĕ партисемпе тата общественнăй организацисемпе канашламалла. Комиссие хăйсен представителĕсене янă икĕ Правительство хăйсен татăклă решенийĕсене йышăниччен, Комисси çырса хатĕрленĕ сĕнӳсене пăхса тухмашкăн Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Китайăн Правительствисене тăратмалла.

3. Пĕрлехи Комиссие Корейăн Демократиллĕ Вăхăтлăх Правительствипе пĕрле тата Корейăри демократиллĕ организацисене хутшăнтарса, Корея халăхне политика, экономика тата общество енчен малалла аталанса пыма, демократиллĕ самоуправлени тума тата Корейăна никама пăхăнман государство туса хума пулăшмалли мерăсене (опека) çырса хатĕрлеме хушмалла.

Корейăн Вăхăтлăх Правительствипе канашланă хыççăн Пĕрлехи Комиссин сĕнĕвĕсене пĕрле пăхса тухмашкăн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Королевствăн тата Китайăн Правительствисене тăратмалла, тăватă державăн вара Корейăна пилĕк çул хушши опека йĕркипе пăхса тăрасси çинчен килĕшӳ çырса хатĕрлемелле.

4. Кăнтăр Корейăна та, Çурçĕр Корейăна та тивекен васкавлă ыйтусене пăхса тухмашкăн тата администрацилле хуçалăх тĕлĕшĕнчен Кăнтăр Корейăри Америка командованийĕпе Çурçĕр Корейăри Совет командованийĕн ĕçĕсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе пымалли мероприятисене çырса хатĕрлемешкĕн икĕ эрне хушшинче Корейăри Америка командованийĕпе Совет командованийĕн представителĕсене канашлăва пухмалла.

IV. КИТАЙ

Ют çĕршыв Ĕçĕсен виçĕ Министрĕ Китайри лару-тăру пирки хăйсем мĕн шухăшлани çинчен пĕр-пĕрне калаçа пачĕç. Вĕсем Наци Правительстви ертсе пынипе Китая пĕрлештерме тата демократизацилеме кирли çинчен, Наци Правительствин мĕнпур органĕсене демократиллĕ çынсене йышлăн хутшăнтарасси çинчен тата гражданла вăрçа пĕтерсси çинчен пĕр-пĕринпе калаçса татăлчĕç. Вĕсем Китайăн шалти ĕçĕсене хутшăнмалла мар политикăна пурнăçа кĕртсе пымаллине тепĕр хут çирĕплетсе пачĕç.

Молотов господинпа Бирнс господин Совет Союзĕпе Америкăн Китайри хĕçпăшаллă вăйĕсем çинчен пĕр-пĕринпе темиçе хут калаçрĕç.

Молотов господин çапла каларĕ: Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем Японин Маньчжурири çарĕсене хĕçпăшалсăрлантарчĕç те вĕсене унтан илсе тухрĕç, анчах та совет çарĕсене Маньчжурирен илсе тухассине Китай Правительстви ыйтнипе февралĕн 1-мĕшĕччен хăварнă, терĕ.

Бирнс господин çапла каларĕ: Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем Çурçĕр Китайра Китай Правительстви ыйтнă пирки тăраççĕ, терĕ, вăл çавăн пекех тата çакна кăтартса пачĕ: Япони çарĕсене хĕçпăшалсăрлантарас тата илсе тухас тĕлĕшпе парăну условийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн тĕп ответлăх Пĕрлешӳллĕ Штатсем çине ӳкет, терĕ. Вăл çапла каларĕ: çав обязанноçсене пурнăçласанах е вăл обязанноçсене Китай Правительстви Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем пулăшмасăрах пурнăçлама пултарсанах Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсене Китайран илсе тухăпăр, терĕ. Совет Союзĕпе Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсене вĕсен обязательствисемпе ответлăхĕ май панă таран хăвăртрах Китайран илсе тухма кирли пирки Ют çĕршыв Ĕçĕсен икĕ Министрĕ пĕр-пĕринпе пĕтĕмпех килĕшрĕç.

V. РУМЫНИ

Король Михай хăйĕн 1945 çулхи августăн 21-мĕшĕнче янă çырăвĕнче Румыни Правительствин составне ӳстересси пирки хăйне канаш пама ыйтнăччĕ. Виçĕ Правительство Михай короле канаш пама хатĕр. Короле национал-царанистсен партийĕн пĕр членне тата либералсен партийĕн пĕр членне Румыни Правительствин составне кĕртме канаш памалла. Аяларах асăннă Комиссин çакна тĕплĕн пĕлмелле:

а) çав çынсем чăнах та вăл партисен Правительствăна представительсем яман ушкăнĕсен представителĕсем пулнине;

б) çав çынсем юрăхлине тата вĕсем Правительствăпа килĕштерсе ĕçлессине.

Виçĕ Правительство çакна шута илеççĕ: Румынин çавăн пек улăштарнă Правительстви çапла каласа памалла: май килнĕ таран хăвăртрах ирĕклĕ суйлав туса ирттерĕпĕр, ăна пурте тата вăрттăн суйлас йĕркепе ирттерĕпĕр, темелле. Мĕнпур демократиллĕ партисен тата фашизма хирĕçле партисен çав суйлава хутшăнма тата хăйсен кандидачĕсене тăратма право пулмалла. Çĕнĕлле йĕркеленĕ Правительство пичет, сăмах, тĕн тата пухусем пухас тĕлĕшпе ирĕклĕхсем парасси çинчен шантарса каламалла.

Çав задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе Михай корольпе тата хальхи Правительствăн членĕсемпе канашламашкăн А. Я. Вышинские, А. Гарриман господина тата А. Кларк Керр сэра, Комисси пулса, халех Бухареста туса кайма полномочи паратпăр.

Çав задачăсене пурнăçласанах тата çавăн пек шантарса каласанах Румыни Правительствине (Совет правительстви унпа дипломатиллĕ çыхăну тытса тăрать) США Правительстви тата Пĕрлешӳллĕ Королевство Правительстви йышăнĕç.

VI. БОЛГАРИ

Виçĕ Правительство çакăн пирки калаçса татăлчĕç: Совет Правительстви Болгарин халь тăвакан Отечественнăй фронт Правительствине демократиллĕ ытти ушкăнсен икĕ представительне кĕртме Болгари Правительствине туслăн канаш парать; çав çынсем:

а) чăн-чăнах Правительствăна представительсем яман партисен ушкăнĕсен представителĕсем пулмалла,

б) чăнахах юрăхлă пулмалла, Правительствăпа килĕштерсе ĕçлекен çынсем пулмалла.

Çак туслă канаша Болгари Правительстви йышăннине тата Правительствăна çĕнĕрен çав представительсене кĕртнине тĕплĕн пĕлсенех, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Правительстви Болгари Правительствине йышăнĕç: Совет Союзĕн Правительстви Болгари Правительствипе дипломатиллĕ çыхăнса тăрать ĕнтĕ.

VII. ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН ОРГАНИЗАЦИЙĔ АТОМ ЭНЕРГИНЕ КОНТРОЛЛЕМЕЛЛИ КОМИССИ ТĂВАССИ ÇИНЧЕН

Атом энергийĕ çинчен каласнă чухне Пĕрлешнĕ Нацисен Генеральнăй Ассамблейи Комисси туса хурасси çинчен каласнă.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем Пĕрлешнĕ Нацисен Генеральнăй Ассамблейинче атом энергине тупнă пирки тухса тăнă ыйтусене тата çакăнпа çыхăнса тăракан ытти ыйтусене те пăхса тухмашкăн Комисси туса хума сĕнме килĕшрĕç. Вĕсем Хăрушсăрлăх Совечĕн ытти яланхи членĕсене, Францине Китая, çавăн пекех тата Канадăна та, Пĕрлешнĕ Нацисен Генеральнăй Ассамблейин 1946 çулхи январьте пухăнмалли пĕрремĕш сессине çак резолюцие тăратас тĕлĕшпе хăйсем çумне хутшăнма чĕнме килĕшрĕç:

«Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейи атом энергине тупнă пирки тухса тăнă ыйтусене тата çакăнпа çыхăнса тăракан ытти ыйтусене пăхса тухмашкăн Комисси тума йышăнчĕ. Çав Комиссин составĕпе компетенцийĕ аялта кăтартнă пек пулмалла.

I. Комисси тăвасси

Генеральнăй Ассамблея Комисси тăвать, çав Комиссин çак пĕлтерĕвĕн пиллĕкмĕш пайĕнче кăтартнă ыйтусене сӳтсе-явмалла.

II. Комисси Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн органĕсемпе çыхăнса тăрасси

а) Комиссин хăйĕн доклачĕсемпе сĕнĕвĕсене Хăрушсăрлăх Советне парса тăмалла; Хăрушсăрлăх Совечĕ, мирпе хăрушсăрлăха сыхлас тесе, урăхла тума хушмасан—çав докладсемпе сĕнӳсене пичетлесе кăлармалла. Кирлĕ чухне Хăрушсăрлăх Совечĕн çав отчетсене Генеральнăй Ассамблейăна тата Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн ытти членĕсене памалла, çавăн пекех тата Экономика Совечĕпе Социальнăй Совета тата Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн системинчи ытти органсене те памалла.

б) Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставĕ тăрăх, пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăрассишĕн тĕп ответлăх Хăрушсăрлăх Совечĕ çине ӳкет. Çавăнпа та Хăрушсăрлăх Совечĕ хăрушсăрлăх ыйтăвĕсем тĕлĕшпе çав Комиссие хушусемпе кăтартусем парать. Çав ыйтусем тăрăх мĕн-мĕн туни çинчен Комисси Хăрушсăрлăх Советне отчетсем парса тăрать.

III. Комиссие çаксем кĕреççĕ

Комиссие Хăрушсăрлăх Советне кĕнĕ государствăсен пĕрер представителĕ кĕмелле тата Канада Хăрушсăрлăх Совечĕн членĕ пулман чухне Канада представителĕ кĕмелле. Комиссири кашни представителĕн хăйне кирлĕ помощниксем пулма пултараççĕ.

IV. Ĕç йĕркин правилисем

Комисси хăйне кирлĕ пек аппарат тума пултарать, вăл ĕç йĕрки пирки хăйĕн сĕнĕвĕсене Хăрушсăрлăх Советне парать, Хăрушсăрлăх Совечĕ вара çав сĕнӳсене çирĕплетет.

V. Комисси ĕçĕсем

Комисси халех ĕçлеме пуçламалла, вăл ыйтăвăн пур тапхăрĕсене те тĕпчесе тухмалла, вăхăтран вăхăта çав тапхăрсем пирки сĕнӳсем тăратмалла. Уйрăмăн илсе кăтартсан, Комисси çакăн пирки татăклă сĕнӳсем памалла:

а) наукăри çитĕнӳсем çинчен тĕп хыпарсене мĕнпур çĕршывсем пĕр-пĕрне мирлĕ тĕллевпе калаçа парас тĕлĕшпе,

б) атом энергийĕпе мирлĕ ĕçсенче çеç усă курмалла тăвас тесе, çав атом энергине контроллесе тăрас тĕлĕшпе;

с) атом хĕçпăшалне çынсемпе япаласене йышлăн пĕтерме юрăхлă ытти мĕнпур тĕп хĕçпăшалсен шутĕнчен кăларса пăрахас тĕлĕшпе;

д) йышăннă условисене пурнăçа кĕртсе пыракан государствăсене çав условисене ытти государствăсем хăрушлăхран сыхламашкăн кирлĕ мерăсем йышăнас тĕлĕшпе; çакна ĕçе тĕпчесе тата ытти майсемпе усă курса тумалла.

Ĕçе уйрăм тапхăрсем тăрăх туса пымалла, кашни тапхăра ăнăçлăн вĕçлени тепĕр тапхăрне тытăниччен тĕнчене кирлĕ чухлĕ шанчăк патăр.

Комиссин Пĕрлешнĕ Нацисен пĕр-пĕр органĕн обязанноçĕсене хутшăнмалла мар, анчах та вăл Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставĕн положенийĕсем тăрăх çав органсем хăйсен задачисене пурнăçласа пынă вăхăтра вĕсене сĕнӳсем парать».

В. МОЛОТОВ.
Эрнст БЕВИН.
Джеймс Ф. БИРНС.

1945 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕ.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнчи делегацисен составĕ

Ют çĕршыв Ĕçĕсен виçĕ Министрĕн канашлăвĕнче СССР, США тата Великобритани делегацийĕсем пулнă, çав делегацисен составĕ çакăн пек пулнă:

Совет Союзĕн делегацийĕ—В. М. Молотов, А. Я. Вышинский, Ф. Т. Гусев, Я. А. Малик, С. К. Царапкин.

США делегацийĕ—Д. Бирнс, А. Гарриман, Б. Коэн, Д. Конант, Ч. Болен господинсем.

Великобритани делегацийĕ—Э. Бевин, А. Керр, А. Кадоган, Р. Кемпбелл, Р Буллард господинсем, генерал-майор Я. Джейкоб.

Çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет

АГИТПУНКТРА

Вăрнар вăрманпромхозĕн Çарăклăри вăрманпунктĕнчи рабочисен клубĕ СССР Верховный Совет суйлав компанийĕ пуçланнăранпа агитпункт пулса тăчĕ. Агитпункта çĕнĕ лозунгсемпе плакатсем çапса илемлетнĕ, унта кулленех хĕрÿ ĕç пырать. Кашни каçах ĕç хыççăн суйлавçăсене агитаторсем суйлав Положенине вĕрентеççĕ, суйлавсем епле пулмалли çинчен тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Агитпункт çумĕнче ятарласа агитбригада тунă, унта пĕтĕмпе 20 çын ытла: коммунистсемпе комсомолецсем, служащисем, вăрман ĕçлекенсем, килхуçи хĕрарăмĕсем т. ыт. те. Агитбригадăна клуб заведующийĕ В. Гаврилов юлташ ертсе пырать.

Агитбригада клубра тата вăрман ĕçлекенсем патне бараксене кайса спектакльсемпе концертсем лартса парать. Юлашки уйăхсем хушшинче агитбригада клубра тата бараксенче пĕтĕмпе 22 спектакль лартса панă. Вăл шутра «Штабра», «Новое изобретение», «Жалость», А. Чеховăн «Юбилей», «Вупăр», «Усал тунă çын» пьесисене т. ыт. те лартнă.

Спектакльсем умĕн яланах докладсем пулаççĕ. Унта тĕрлĕ темăсемпе: тĕнчери лару-тăру çинчен, СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсем çинчен, суйлав системи çинчен, вăрман хатĕрлевĕн задачисем çинчен, сывлăха сыхлас енĕпе те калаcа ăнлантарса параççĕ. Докладсене ВЛКСМ Центральный Комитечĕн комсоргĕ Н. Захаров, агитбригада руководителĕ В. Гаврилов, учительница Н. Храмова, уйрăм агитаторсенчен Ф. Елоков, медсестра А. Васильева юлташсем туса параççĕ. Унтан спектакль е концерт пуçланать. Спектакль хыççăн уйрăм исполнительсем юрăсем юрласа е сăвăсем каласа параççĕ, оркестр выляса парать.

Агитбригада 77-мĕш баракра хĕрлĕ кĕтес уçса йĕркелесе хăварнă.

Агитпунктра, кунсăр пуçне, кашни 5 кунта пĕрре çамрăк суйлавçăсен вечерĕсем пулаççĕ. Унта суйлавсем пирки паракан ыйтусем çине ответлесе, тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Агитаторсене, агитпунктра ĕçленисĕр пуçне, Çарăклă поселокĕнче уйрăм килсем çирĕплетсе панă, вăрманти бараксенче те агитаторсем ĕçлеççĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Заводри çамрăк суйлавçăсем

Тоня Старшовăпа Эна Бурпева—Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе заводри çамрăк работницăсем. Вĕсем 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче суйлава малтанхи хут хутшăнаççĕ. Çак паллă куна çамрăк суйлавçăсем ĕçри пысăк çитĕнÿсемпе тата ĕç тухăçлăхне темиçе хут ÿстернипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

СССР Верховный Совет суйлавĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, вĕсем кулленхи нормăна 230 процентран кая мар тултарса, станоксене яланах таса тытма, пĕр браксăр ĕçлеме, ĕçри 480 минутпа пĕтĕмĕшпех усă курма обязательство илнĕ.

Хăйсен сăмахне çамрăк суйлавçăсем пысăк тимлĕхпе пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем халĕ хăйсен нормине кулленех 230 процентран кая мар тултараççĕ, Уйрăм кунсенче вара вĕсен ĕç тухăçлăхĕ 250 процента та çитет.

Сменăна Старшовăпа Бурпева яланах ĕç пуçланиччен 15—20 минут маларах пыраççĕ. Ĕçе пуçаниччен малтан çак кун мĕнле ĕçсем тумаллипе паллашаççĕ, ĕçлеме кирлĕ материалсене хатĕрлесе хураççĕ, станоксене йĕркелеççĕ. 8 сехет тĕлне вара ĕçе тытăнма вĕсен пурте хатĕр. Çапла майпа вĕсем ĕçри пĕр минутăна та ахаль сая ямаççĕ. Хăйсен станоксене çамрăк токарьсем яланах таса та йĕркеллĕ тытаççĕ. Çавăн пек тимлĕн ĕçленине пула вĕсен бригади хăйĕн заданине яланах иртттерсе тултарать.

С. ГЕЛЬФАНД.

Суйлава çитĕнÿпе кĕтсе илессишĕн

БУСЛАВКА. Краснодар крайĕнчи Старо-Мышастовски МТС тата хамăр республикăри Красноармейски МТС коллективĕсем тракторсем юсас ĕçре социализмлă ăмăрту пуçарса яма чĕнсе каланипе МТС-ри трактористсемпе трактористкăсен тата рабочисен пухăвĕнче сÿтсе-яврăмăр. Пирĕн коллектив çав патриотла пуçарăва ырларĕ, суйлав умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса татăклă обязательствăсем илчĕ.

Тракторсене февраль уйăхĕнче, ытти ялхуçалăх машинисене апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме, çураки вăхăтĕнче кирлĕ горючие хатĕрлесе хума обязательство илтĕмĕр. Паянхи куна 40 тонна ытла горючи хатĕрленĕ.

Халиччен пирĕн МТС-ăн электроэнерги çуккипе пула чылай чăрмавсем пулатчĕç. Коллектив ăмăртăва хутшăннă май, двигателе юсаса ĕçе ячĕ, халĕ ĕнтĕ пирĕн хамăрăн электроэнерги пур. Тракторсем юсанă çĕрте ĕçлекенсем кунне икĕ хутчен столовăйра апатланаççĕ.

МТС коллективĕ паянхи кун тĕлне 11 трактор, 18 трактор плугĕ, 7 сеялка, 6 культиватор, 3 молотилка юсаса пĕтерчĕ. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсанă çĕрте уйрăмах Саперовпа Казаков бригадисем лайăх ĕçлеççĕ. Çĕнĕрен трактористсем вĕрентсе хатĕрлеме курс организацилерĕмĕр. Унта 25 çын вырăнне 40 çын вĕренет. Илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн, СССР Верховный Совечĕн суйлавне çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн трактористсемпе трактористкăсем ăмăртса ĕçлеççĕ.

А. ЛАВРЕНТЬЕВ,
Куславкка МТС директорĕ.

Колхоз правленийĕн пÿлĕмĕнче

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Кашни эрнекун каçхине «Новый мир» колхоз правленине 1-мĕш бригадăри колхозниксемпе колхозницăсем пухăнаççĕ. Суйлавçăсем пухăнса çитиччен правлени пÿлĕмĕнче тенкелсем, сĕтелсемпе пукансем йĕркелесе лартнă.

Бригадăри суйлавçăсем пурте пухăнса çитсен, Çавалçырмари çичĕ çул вĕренмелли шкулти учитель Л. Ездов калаçу пуçарса ярать:

— Юлташсем,—тет вăл, — малтанах иртнĕ занятинче мĕн çинчен калаçнипе аса илер-ха. СССР Верховный Советне хăçан суйлассине кам каласа парать?

— Февралĕн 10-мĕшĕнче,—ответлеççĕ темиçе суйлавçă харăссăн.

Камсем суйлава хутшăнма пултараççĕ? Камсем суйланма пултараççĕ? Мĕнле йĕркепе суйлатпăр? Тата ыттисем çинчен те агитатор Л. Ездов ыйтусем парса аса илтерет те çĕнĕ тема çине куçать.

— Паян эпир Союз Советне тата Национальноçсен Советне суйлассипе çинчен тĕплĕнтерех сÿтсе-явар,—тет вăл.

Хасат вуласа парсан, Л. Ездов суйлавçăсене хăйĕн сăмахĕсемпе ăнлантарса парать. Уйрăмах агитатор СССР Верховный Совечĕ икĕ палатăран тăни çинчен, икĕ палата та пĕртан пулни çинчен, суйлавçăсем суйлав кунĕнче миçе бюллетеньпе суйласси çинчен. бюллетеньсем мĕн тĕслĕ пуласси тата хăш бюллетенĕпе ăçта суйласси çинчен тĕплĕн ăнлантарса парать.

Л. Ездов хаçатра пичетленсе тухнă бюллетень формисене, халĕ хăй сăрласа хатĕрленĕскерсене, кăтартать:

— Çакăн пек пулаççĕ ĕнтĕ суйлав бюллетенĕсем,—тет вăл,—Шурă тĕсли Союз Советне суйламалли бюллетень, кăвак тĕсли—Национальноçсен Советне РСФСР-тан суйламалли бюллетень, кĕрен тĕсли—Национальноçсен Советне автономиллĕ республикăран суйламалли бюллетень.

Агитатор ăнлантарса панă хыççăн, суйлавçăсем мĕн ăнланайманнине ыйтса пĕлеççĕ.

З. ПОРФИРЬЕВ.

ТĂРĂШСА ĔÇЛЕÇÇĔ

ЕТĔРНЕ. Суйлав участокĕсенче СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес ĕç анлăн сарăлса пырать. Кашни суйлав участокĕнчех суйлав иртттерме çуртсем уйăрнă, урнăсем хатĕрленĕ, ял Совечĕсем суйлавçăсен списокĕсене туса çитереççĕ. Суйлавçăсен списокне тăвас ĕçе профсоюзпа совет, комсомол активĕн анлă массине явăçтарнă. Агитаципе пропаганда ĕçне туса пыма районра 26 агитколлектив тунă, вĕсенче 432 агитатор тăрать. Участоксенче агитпунктсен руководителĕсене те çирĕплетнĕ ĕнтĕ.

Агитаци ĕçне уйрăмах Кăташри суйлав участокĕнче лайăх туса пыраççĕ. Ку суйлав участокĕнче 17 агитатор ĕçлет. Комсомол организаци пуçарнипе комсомолецсем валли Сталинла Конституципе суйлав законне вĕренме кружок организациленĕ. Кружок занятийĕсем эрнере икĕ хутчен пулса иртеççĕ. Кружок занятийĕсене комсомолецсемсĕр пуçне союзра тăман çамрăксем, Хĕрлĕ Çартан таврăннă çĕнтерÿçĕ-воинсем çÿреççĕ. Кружок занятийĕсем пуçланас умĕн агитаторсен ĕçĕпе паллаштараççĕ. Комсомолецсем кăна декабрь уйăхĕнче Сталинла Конституципе суйлав законĕ çинчен 5 доклад, бригадăсенче çирĕм ытла калаçусем туса иртттернĕ. Ф. Игнатьев, П. Михайлов, Р. Петрова, Е. Иванова, С. Пугачев агитаторсем кашни суйлавçăпа уйрăмăн 3—4 калаçу иртттернĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем хушшинче те суйлав законне ăнлантарас ĕç лайăх пулса пырать. Агитаторсем конюхсемпе уйрăм калаçусем туса иртттереççĕ.

Ку суйлав участокĕнче кабинăсем те тума тытăннă ĕнтĕ, участокри суйлав комисси вырнаçакан пÿлĕмĕн кăмакисене юсанă, кантăкĕсене лартса занавескăсем карнă, плакатсемпе тата лозунгсемпе илемлетнĕ. Колхозăн анлă клубĕн тăррине йывăçран касса сăрласа пысăк саспаллисемпе «10 февраля—день выборов в Верховный Совет СССР»—тесе çырнă.

Суйлава хатĕрленнĕ май вулав çурчĕсем те хăйсен ĕçĕсене тĕпренех ÿрăхлатса çĕнетрĕç. Вĕсенче тĕрлĕрен темăсемпе докладсем, калаçусем иртттереççĕ, хаçат витринисемпе справка сĕтелĕсем пур, художествăллă пултарулăх кружокĕсен ĕçĕсене лайăхлатнă.

Кунти колхозсем суйлава хатĕрленсе хуçалăх ĕçĕсенче чылай çĕнĕ çитĕнÿсем турĕç, колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕпе политикăллă активлăхĕ те чылай ÿсрĕ. «Пионер» колхозри М. Максимовпа А. Краснов тимĕрçĕсем суйлав кунне ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернипе кĕтсе илме социализмлă обязательствăсем илчĕç. Бригадăсенче çитес çулхи вăйлă тырпулшăн анлă кĕрешÿ сарăлса пырать. Фермăсенче ĕçлекенсем выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерсе, 1946 çулта государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене памалли обязательствăна çĕнĕ çулăн пĕрремĕш кварталĕнчех тултарассишĕн кĕрешÿ пуçарса янă.

Суворов ячĕпе тăракан, «Комбайн», «Сура» колхозсем суйлав кунĕ тĕлне вăрман хатĕрлесе турттармалли плана тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

ССР Союзĕн орденĕсемпе медалесене илнине ĕнентерекен вăхăтлăх удостоверенисене яланхи документсемпе улăштармалли йĕрке

Отечественнăй аслă вăрçăра командовани заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн наградăланă çар çыннисем тĕрлĕ сăлтавсем пирки хăйсен наградисемпе пĕрле орденсен яланхи документчĕсене илме пултарайман, вĕсем вырăнне вăхăтлăх удостоверенисем кăна илнĕ. Хĕрлĕ Çартан çар çыннисене чылайĕшне киле янă вăхăтра тата наградăланисене законпа паракан çăмăллăхсемпе усă курма май пултăр тесе, ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ вăхăтлăх удостоверенисене орденсен яланхи документчĕсемпе улăштарма йышăннă.

Чăваш АССР-ĕнчи Çар комиссариачĕ 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Чăваш республикинчи наградăланă çынсене пурне те вăхăтлăх удостоверенисене орденсен яланхи документчĕсемпе улăштарса парать.

Орденсемпе наградăланисем пурте хăйсем ăçта пурăннă тăрăх хулари е районри военкоматран орден кĕнекине, кашни çул чугун çулпа е шыв çулĕпе çÿремелли кĕнекене тата орден тăрăх укçа илмелли купон кĕнекине илме пултараççĕ. Медальсемпе наградăланисем —медаль илни çинчен ĕнентерекен яланлăх удостоверенисене тата медальсем тăрăх укçа илмелли купонсен кĕнекине илме пултараççĕ.

Наградăланисен пурин те вăхăтлăх удостоверенисене хăйсем пурăнакан вырăн тăрăх хулари е районри военкомата тăратмалла, улăштарма илнĕ вăхăтлăх удостоверенисем вырăнне республикăри военкоматран орденсен яланхи документчĕсене иличчен тивĕçлĕ квитанцисем параççĕ.

Вăхăтлăх удостоверенисене районри е хулари военкомата илсе пынă чухне наградăланисен хăйсемпе пĕрле çаксем пулмалла:

а) хăйсене наградăланă орденсем;

б) камне ĕнентерекен документсем: паспорт, çар билечĕ, ялта пурăнакансен паспорт вырăнне ял Советĕнчен справка илсе пымалла. Çар çыннисен хăй камне палăртакан удостоверени е красноармеец кĕнекине илсе пымалла;

в) май килсен, пичет пусса ĕнентернĕ икĕ фотокарточка (6×4 см.);

г) тĕрлĕ сăлтавсемпе орденсем е вăхăтлăх удостоверенисем çухалнă пулсан, наградăланă çынсен асăннă документсемсĕр пуçне ордена е вăхăтлăх удостоверение çухатни çинчен калакан документсем илсе пымалла тата хулари е районри военкомсен ячĕпе çырнă епле çухатнине тĕплĕн палăртакан хутсем илсе пымалла.

Хулари е районри военкоматсенче вăхăтлăх удостоверенисем вырăнне илнĕ квитанцисене наградăланисен тимлĕн упраса тăмалла, вăл квитанцисене тепĕр хут военкомата чĕниччен упрамалла.

Вăхăтлăх удостоверенисене хăçан илсе пымаллине районри е хулари военкоматсем кăтартса параççĕ: ялсенче пурăнакан çынсене ял Совечĕсем урлă, хулара пурăнакансене уйрăм повесткăсемпе пĕлтереççĕ. 1946 çулхи февралĕн 1-мĕшчен вăхăтлăх удостоверенисене улăштарма хулари е районри военкомата пымалли çинчен повестка илмесен, наградăланă çынсен вăхăтлăх удостоверенисене пама чĕнессине кĕтмесĕрех хулари е районри военкомата çитмелле.

СУЙЛАВ ЯЧĔПЕ ВЫСТАВКА УÇĂЛАТЬ

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсем ячĕпе художествăллă галлерейăра чăваш художникĕсем ÿкернĕ картинăсен выставкине организацилет. Выставка Сталинла Конституци пирĕн çĕршывра пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине кăтартмалла. Унта чăвашсен нумайранпа ĕçлекен художникĕсен (Спиридоновăн, Сверчковăн т. ыт. те) картинисемсĕр пуçне, художник-фронтовиксен: Г. Харлампьевăн, П. Сизовăн, П. Моховăн, Руденовăн, Григорьевăн картинисем пулаççĕ.

Выставка февралĕн 1-мĕшĕнче уçăлать.

ГАЛЛЕРЕЯ ВАЛЛИ ÇĔНĔ КАРТИНĂСЕМ

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ художествăллă галлерея валли çĕнĕ картинăсем туяннă. Вĕсем хушшинче Н. Сверчковăн «Чăвашсене тĕне кÿртни», Григорьевăн «Хĕлле» тата «Шупашкар», Фроловăн «Вăрман», Спиридоновăн «Шăпăрçă» ятлă картинисем т. ыт. те пур. Ку картинăсене халь галлерейăна кăларса тăратнă.

ХУДОЖЕСТВО ШКУЛĔ

Шупашкарти художество училищи çумĕнче кĕçĕн çулхи ачасене валли художество шкулĕ организациленĕ. Унта халь картинăсем ÿкерес тĕлĕшпе питех те пултарулла 29 ача вĕренет. Ку шкулта 4 çул вĕреннĕ хыççăн вĕсем художество училищине куçаççĕ. Çамрăк художниксене РСФСР-ти искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ М. Спиридонов, Сверчков, Григорьев т. ыт. художниксем те вĕрентеççĕ.

«ТАРАС БУЛЬБА» ПОВЕСЕ ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ

Писатель Кузьма Турхан вырăссен чаплă классикĕ Н. В. Гоголь çырнă «Тарас Бульба» повеçе чăвашла куçарса пĕтерне. Вăл кĕнеке Чăвашгосиздатра 7000 экземпляр пичетленсе тухать.

Америкăн Манилăри тата Бахрейн утравĕсем çинчи çарĕсене киле яма тытăнса тăни çинчен Америкă хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри хаçатсем çакăн çинчен нумай çыраççĕ: декабрĕн 25-мĕшĕнче Манила хулинче Америка çарĕ валли çынсем хатĕрлекен центрăн штабĕ умĕнче 4.000 салтак демонстраци тунă, вĕсем хăйсене киле яма ыйтнă.

Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Манила хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, çав демонстраци çар власĕсем Америка салтакĕсене Америкăн çар транспорчĕсем çине лартса киле яма пăрахнă пирки пулнă. Офицерсем хушнипе, демонстрацире пулнă салтаксем хăйсен баракĕсене таврăннă, анчах та вĕсем суднăсене яма чарăнни çинчен каласма тата киле ярас тĕлĕшпе тухса тăнă тĕрлĕ жалобăсене сÿтсе-явмашкăн декабрĕн 26-мĕшĕнче митинг пухма йышăннă.

«ПМ» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, США çар министерстви Перси заливĕнчи Бахрейн утравĕсем çинче тăракан сывлăш-çар вăйĕсен çыннисене (вĕсем пуринчен ытла çыхăну отрячĕсенче ĕçлеççĕ), арми халь Бахрейн çинчи аэродромпа усă курмасть пулин те, Америкăна таврăнма чарса тăрать. Çав соединенисене Перси заливĕнчи Дхарам утравĕ çинчи çĕнĕ аэродрома яраççĕ пуль тесе шутлаççĕ, вĕсене унта июль уйăхĕнче яма шутлаççĕ. Бахрейн утравĕ çинчи сывлăш-çар вăйĕсен çыннисем çакăн пирки тăрăхасçĕ: пирĕн Америкăри граждански авиапи компанийĕсен, çав шутра «Пан—Америкен Эйруэйс» компанийĕн, радиосçĕ валли ĕçлесе тăма тивет, теççĕ. Çав компанисем хĕçпăшаллă вăйсен çыннисемпе аэропортсене тата ытти оборудованийе сыхласа тăрас ĕçре усă кураççĕ. Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи сывлăшри çыхăнусенче тĕп вырăн йышăнас тесе, авиапи компанийĕсем çав аэродромсемпе вăрçă кĕтнĕ хыççăн усă курма шутлаççĕ.

США ÇАР МИНИСТРĔ ПАТТЕРСОН АМЕРИКА ÇАРĔСЕНЕ АМЕРИКĂНА ИЛСЕ ТАВРĂНАССИ ÇИНЧЕН ÇЫРНĂ ÇЫРУ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сенатор-демократ Лукас (Иллинойс штатĕнчен) США çар министрĕ Паттерсон янă çырăва пичетлесе кăларнă. Çав çырура çапла каланă: Америка çарĕсене Филиппин утравĕсем çинчен киле ярас ĕç питĕ хăвăрт пулса пырать, суднăсем çитменнине часах пĕтерсе лартатпăр, тенĕ. Япони çарĕсене Японие Америка суднисемпе ăсатаççĕ тесе салтаксем ÿпкелешни çинчен Паттерсон çапла каланă: Япони салтакĕсене çарсем илсе çÿреме юрăхлă мар пушă грузовой суднăсемпе çеç илсе каяççĕ, тенĕ. Лăпкă океан районĕнче хальхи вăхăтра хăйне уйрăм мисси ĕçлет, вăл салтаксене киле ярас ĕçе мĕнле хăвăртлатма май пуррине тĕпчесе вĕренет.

АМЕРИКĂРИ ЭКСПОРТПА ИМПОРТ БАНКĔ ФРАНЦИЕ КИВÇЕН УКÇА ПАРАТЬ

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Америкăри экспортпа импорт банкĕ Франциe 550 миллион доллар кивçен укçа пама палăртнă. Францин учредительнăй пухăвĕ çак проекта пĕрсаслăн ырланă.

США-ри ЗАБАСТОВКĂСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет: ятарласа тунă комисси ыран «Дженерал моторс» фирмин завочĕсенчи рабочисен забастовкине йĕрлесе тĕпчеме тытăнать. Çак фирмăн завочĕсенчи 175.000 рабочи ĕçукçине хăпартма ыйтаççĕ.

Ĕнер Нью-Йоркри электрозаводсенче ĕçлекен 208.000 рабочин представителĕсемпе заводсен хуçисем хушшинчи калаçу ăнăçсăр вĕçленнĕ. Забастовка тăвакансем ĕçукçине хăпартма ыйтаççĕ.

Январĕн 3-мĕшĕнче Нью-Йоркри электропромышленноçăн ытти предприятийĕсенче ĕçлекен 170.000 рабочи забастовка пуçлаççĕ. Çавăнпа телефон ĕçĕнчи рабочисем те забастовка пуçлама пултараççĕ.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн Исполнительнăй бюровĕ йышăннă решени

ПАРИЖ, декабрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн Исполнительнăй бюровĕн ларăвĕнче январĕн пирвайхи кунĕсенче федерацин генеральнăй секретарьне Луи Сайяна Берлина яма йышăннă. Сайянăн федераци йышăннă решенисене Германири Контроль Советне памалла пулать. Исполнительнăй бюро çавăн пекех тата 6 çынтан мисси туса хума йышăннă. Çав миссин нимĕçсен промышленноçлă тĕп центрĕсене пырса курмалла, профсоюз организацийĕсен пурнăçĕпе паллашмалла пулать. Исполнительнăй бюро Пĕрлешнĕ нацисен уставĕнче палăртнă организацисене хăйĕн представителĕсене ярасшăн пулни çинчен çĕнĕрен çирĕплетсе каланă. Исполнительнăй бюро Пĕрлешнĕ нацисен уставĕ çине алă пуснă кашни правительствăна Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ мĕнле позици йышăнса тăни çинчен пĕлтерме йышăннă тата Генеральнăй ассамблейăн çитес сессийĕнче федерацие сăмах пама ыйтнă.

«НЬЮ-ЙОРК ПОСТ» ИТАЛИРИ ФАШИСТЛА ОРГАНИЗАЦИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк пост» хаçатăн Римри корреспонденчĕ Хили Италири «Уомо Куалюнкуе» хаçата кăларса тăракан Гульельмо Джаннинипе курса калаçнă. Джаннини вăл «Уомо Куалюнкуе» ятлă партин лидерĕ пулса тăрать. Вăл уççăнах çапла каланă: вăрçă вăхăтĕнче эпĕ тĕнĕл держависем çĕнтерччĕр тесе хам мĕн тума пултарнине йăлтах турăм, тенĕ. Джаннини каланă пирки Хили çапла çырать:

«Паян Италире Муссолини мĕлки çÿрет...»

Хили каланă тăрăх, Джаннини, Итали халăхĕ тарăхнипе усă курса, киревсĕр ĕçсем тăвать. «Уомо Куалюнкуе» центрпа сулахайри ушкăнсене тапăнать, фашистсем хушшинчи тасатăва халех чарса лартма, «Хĕвеланăçĕнчи тĕнчен пĕрлĕхне туса хума» чĕнет.

«Уомо Куалюнкуе» ÿссе пынă май, тет автор, çакăн пек пĕлтерÿ сарăлнă: демократиллĕ правительствăран тата çĕрпе промышленноçа социализацилесрен хăраса тăнă реакциллĕ çынсем, пысăк влияниллĕскерсем, анчах та пытанса пурăнаканскерсем, «Уомо Куалюнкуе» хаçат урлă хăйсен шухăшĕсене сараççĕ, хаçата нумай укçа-тенкĕ панă. Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, хаçата укçа пуринчен ытла цĕртăван Сальваторсем тата Микеле Шалера панă, вĕсем Муссолини Рима хирĕç пуçланă поход валли те укçа-тенкĕ парса тăнă, фашизм вăхăтĕнче миллионшар услам илсе пуйнă.

Италири ĕçсене лайăх пĕлекен пĕр публицист, тет Хили, çапла каланă: Джаннини—фашист, пытанса пурăнакан фашистсем ăна пур енчен те пулăшаççĕ. Союзниксем Джаннини ĕçĕсем пире тивмеççĕ, тесе шутлаççĕ пулас, анчах та «Джаннини пропагандине лайăх пĕлекен союзниксем» çапла шутлаççĕ: Джаннини ĕçĕ пысăк хăрушлăх курет, «Уомо Куалюнкуе» партине туса хуни вара фашизма çĕнĕрен чĕртсе тăратнине пĕлтерет, теççĕ. Çапла пулсан та вĕсем хальхи вăхăтра Джаннине хирĕçле мерăсем йышăнасшăн мар.

ИТАЛИРИ КОМПАРТИ ÇУРТĔНЧЕ ГАЗЛĂ БОМБА ÇУРĂЛСА КАЙНĂ

РИМ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио министрсен совечĕн президиумĕн пĕлтерĕвне парать. Пĕлтерÿре çапла каланă: ĕнер Римра 18 сехет тĕлнелле Италири компарти руководителĕсен ларăвĕ пулнă çуртра пăчăхтаракан газлă бомба çурăлса кайнă. Бомба çурăлнипе чÿречесен кантăкĕсем ваннă, вара кантăксем витĕр зала газ кĕнĕ. Ларура пулнисенчен хăшпĕрисене медицина енĕпе пулăшу панă. Итали власĕсем çак ĕçе йĕрлесе тĕпчеççĕ.

ПАПА РАШТАВРА ЧĔНСЕ КАЛАНИ ÇИНЧЕН

РИО-ДЕ-ЖАНЕЙРО, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Бразилири «Трибуна популар» хаçат Римри папа раштавра чĕнсе калани пирки çапла çырать: «Фашизм цивилизацие, культурăна тата ĕненÿ ирĕклĕхне хирĕç тунă преступленисене папа сивлемен». Вăрăм вăхăтлăха мир туса хурассипе папа шанманни çинчен хаçат çапла çырать: «Çакнашкал скептикла шухăшсем вăрçă итогĕсене тунă чухне асăрханулла та çемçе кăмăллă пулма чĕнниччен вăрçă преступникĕсене хÿтĕлеме тытăнасси те инçе юлмасть».

НЕННИ ЛОНДОНА КАЯТЬ

ПАРИЖ, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: лейбористсен партийĕ Итали министрĕсен совечĕн вице-председательне Неннине Лондона пыма чĕннĕ. Ненни Лондона январĕн пĕрремĕш çуррине каять.

ДАРЛАНА ВĔЛЕРНИ ПИРКИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет: 1942 çулхи декабрь уйăхĕнче Алжирта Дарлан адмирала вĕлернĕшĕн Борнье де ля Шапель француза судпа айăпласа вĕлернĕччĕ. Халĕ çав Шапеле вилнĕ хыççăн тÿрре кăларнă, мĕншĕн тесен, халĕ тупнă документсем çакна кăтартса параççĕ: Дарлан адмирал Франци интересĕсене сиен кÿрекен ĕçсем тунă, судпа айăпласа вĕлернĕ Шапель тăшмана хирĕç кĕрешекен юхăмăн членĕ пулнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99. ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00482 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Тираж 16.000 экз